К 84.89(=Чув)
С 16
Ч-42623

Петĕр Çăлкуç

САВĂНĂÇЛĂ ТĔЛПУЛУ

Национальная библиотека ЧР
4-042623



К84.891-4ув)
С 16

Петĕр Çăлкуç

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

САВĂНĂÇЛĂ ТĔЛПУЛУ

Сăвăсем

Художник Н.А. Васильева

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2009

К8489(Чув)6-52

УДК 821.512.111
ББК 84 (2 Рос=Чув) 6-52я93
Ç 16

ПРОВЕРЕНО
2010

Çăлкуç П.Н.

Ç 16 Савăнăçлă тĕлпулу: Сăвăсем / П.Н. Кузьмин. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2009. — 47 с.
ISBN 978-5-7670-1648-8

УДК 821.512.111
ББК 84 (2 Рос=Чув) 6-5

© Çăлкуç П.Н., 2009
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2009

ISBN 978-5-7670-1648-8

Ч-42623
...ИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
...ВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Король

Пуçне каçăртнă автан,
Кашта çинчи утаман,
Киккирикне кăтартса:
«Эп король», — тет мухтанса.

Кушак генерал

Урампа пырать кушак,
Тăхăннă кăвак пушмак,
Танлăн вăл пуçне суллать,
Генерал пек туйăнать.

Шывĕ сивĕ

Шыв хĕрринче сар чăхсем
Пит шухăшлăн тăраççĕ:
«Шывĕ сивĕ-çке», — тесе
Кӳлле кĕме хăраççĕ.

Хура хур

Çав хура хур амине
Эп пĕрре ятлатăпах.
Хăй кĕпи хуралнине
Вăл асăрхамасть пачах.

Инкек

Качака такин инкек,
Тĕкĕшеймĕ вăл текех.
Ма тесессĕн ватăлнă,
Мăйраки ун катăлнă.

Арпус

Аркашпала иксĕмĕр
Ĕнер арпус илтĕмĕр.
Çурмалла пайларăмăр,
Кăмăллăн сăйлантăмăр.

Груша

Манăн шăллăм Гриша
Груша юратать.
Тĕлĕкре те груша
Вăл хăш чух курать.

Çумăр

Ӳпĕнсе, пĕкĕрĕлсе
Йăмрасем кашла пуçларĕç.
Сарă чĕпсем шимплетсе
Хур ами айне васкарĕç.
Вĕтĕ çумăр пĕрчисем
Харăс-харăс шĕпĕртетрĕç.
Пуç çинчех пек такамсем
Тĕпĕр-тĕпĕр тĕпĕртетрĕç.
Пĕр пепкин хăрах ури
Хур айне вырнаçайман-тăр.
Çумăрĕ вара юри
Ун çине тумлам тумлатрĕ.
Пĕчĕк чĕпĕ тĕлĕнсе
Ăнланмасăр пăхрĕ, пăхрĕ.
Пирĕн ялăн тĕлĕнче
Çӳл тӳпе куççулĕ тăкрĕ.

Тăлăх чĕпĕсем

Инкубатор пепкисем,
Пĕчĕкçеç хур чĕпписем,
Тĕнчене килетĕр,
Тăлăххăн ӳсетĕр.

Шимп те шимп!
шимп те шимп!
Мĕн пирки пуплетĕр-ши?

Тĕпĕл-тĕпĕл чупнăçем
Аннĕре шыратăр.
Шел те, пурпĕр систерем:
Килессе ан шанăр.

Шимп те шимп!
шимп те шимп!
Килмĕ-шим, килмĕ-шим?

Ют çемье енне хăш чух
Шанăçлăн пăхатăр,
Аннĕр ав унта та çук,
Пурпĕрех тупаймăр.

Шимп те шимп!
шимп те шимп!
Тăлăх-шим, тăлăх-шим?..

Тĕлĕнекен çерçи

Пăла выртать тĕлĕрсе,
Çерçи тăрать тĕлĕнсе.

Савăнăçлă тĕлпулу

Пĕринче ирпе ирех
Тус патне эп кайнăччĕ.
Кушака хваттерĕмрех
Çывратса хăварнăччĕ.

Вăхăт иртнине сисмен —
Кăнтăрла çеç таврăнтăм.
Урамра кĕтмен çĕртен
Тĕлĕнсе тăп чарăнтăм.

Мăрăлккам чӳречерен
Пĕтĕм вăйпа карăннă,
Вăл мана курнипелен
Питĕ-питĕ савăннă.

Юрататăп, аннеçĕм, сана

Юрласа парар-и çепĕç юрă
Сарă хĕвел пек аннемĕре.
Ёмĕр-ёмĕр эсĕ сывă пурăн,
Ах, аннемĕр, эс пĕртен-пĕрре.

Ăнăçу та çут телей сунар-и
Йăлтăр çăлтăр пек аннемĕре.
Пĕр-пĕрне куçран пăхса кулар-и,
Ах, аннемĕр, эс пĕртен-пĕрре.

Тав туса ачашшăн ыталар-и
Хӳхĕм чечек пек аннемĕре.
Савăнса кăна ялан пурнар-и,
Ах, аннемĕр, эс пĕртен-пĕрре.

Мĕнле аван вăл пурри

Манăн пур кушак çури,
Пит аван-çке вăл пурри.
Кунсерен вăл ирхине
Питĕмрен сĕртĕннине
Питĕ лайăх туятăп,
Куçа уççа яратăп.
Мăрлатать кушак:
«Мăр-мăр,
Каймалла шкула сан. Тăр!»

Тата тăххăр пур

Пĕчĕкçеçĕ Урине
Тек ĕмет хăй пӳрнине.
Килĕшӳсĕр йăлине
Ниепле пăрахаймасть,
Кӳршĕри Маринене
Тăтăшах вăл култарать.
Тĕл пулсассăн пĕр кунне
Ак мĕн терĕ Марине:
— Уринеçĕм, Урине,
Шав ĕмсессĕн пӳрнӳне
Юлĕ вăл пĕчĕкленсе,
Хăрса ӳкĕ çинçелсе.
Кулянмарĕ Урине,
Хăвăрт тупрĕ хуравне:
— Хăрамастăп, акă кур:
Тата тăхăр пӳрне пур.

Пĕр кунхине урамра

Ирхине ирех паян
Тухрăм эпĕ урама.
Тытăннă унта автан
Сĕрме купăс калама.
Акă çапла, ак çапла
Сĕрме купăс калама.
Пĕчĕк сарă чĕпĕсем
Саркаланса ташлаççĕ.
Çунат çапса амăшсем
Савăнайса тăраççĕ.
Акă çапла, ак çапла
Савăнайса тăраççĕ.
Тӳпере чĕкеç кулса
Кĕвĕ майăн яраннать.

Чĕпсене саламласа
Çунаттисене суллать.
Акă çапла, ак çапла
Çунаттисене суллать.

Çурхи кăмăл

Килчĕ çитрĕ çуркунне
Ăшă-ăшă кăнтăртан.
Хăйĕн пĕтĕм çутине
Пачĕ валеççе чунтан.
Çут тумла юрла-юрла
Шăтарать сив хĕл тумне.
Çерçисем тăнла-тăнла
Тасатаççĕ çунатне.
Улшăнать майĕпенех
Шурă çĕлĕклĕ тĕнче.
Çуркунне, килех, килех!
Эсĕ пирĕн чунсенче.
Сапнă май ĕлккен шевле
Хĕрӳрех пăхать хĕвел.
Шел-ши, тусăмсем, хĕле?
Тен, кăштах, чăнах та, шел.
Пурпĕр кăмăлăм аван,
Хыттăнрах тапать чĕре:
Пин те пĕр хавас самант
Малашне кĕтет пире.
Кунсерен илемлĕрех
Курăнать чăпар тĕнче.
Çуркунне, килех, килех!
Эсĕ пирĕн чунсенче.

Çывăр, уйăх

Сăпкари ача пек уйăх
Выртнă, лăпкăн тĕлĕрет.
Куç пăван асамлă тунсăх
Çак сăнпа, тен, пĕр килет?

Уйăх, тен, ĕçленĕ эсĕ
Кăнтăрла хастарланса,
Çавăнпа халь ним сисмесĕр
Çывăратăн мăшлатса?

Эсĕ каннине чухланăн
Шăплăх килнĕ шăвăнса.
Çак асамлăха чунтан эп
Тинкеретĕп савăнса.

Асанне е кукамай?

Кайрăм асанне патне
Пĕринче эп хăнана.
— Асанне, — теп, — асанне,
Пĕрре вăрç-ха Динăна.
Мĕншĕн вăл сана ялан
Кукамай тесе чĕнет?
Çак мана мĕнпур чунтан
Кулленех кӳрентерет.
— Çук, — тет, — Дина, — эсĕ ху
Йăнăшатăн яланах.
Кукамай, тархасшăн, хуш,
Тĕрĕс чĕнтĕр вăл сана.
Асанне йăл кулнă май:
— Шутлăр, — терĕ, —
иксĕрех...
Асанне е кукамай?
Хăшĕ пулĕ тĕрĕсрех?

Кĕр кунĕ

Пăхать сайраран та сайра
Халь пирĕн ялта хĕвел.
Вăл кăнтăр енчех хăнара
Пулма тăрăшать-мĕн — шел!

Çапах кичем мар тĕнче:
Умрах сар хĕвел тĕррисем —
Асамлă кĕрхи çил çинче
Вĕçеççĕ вĕл-вĕл çулçăсем...

Кушакпа шăши

— Ыратать пĕрмай шăм-шак
Шăшие хăваласах, —
Мăртăхать хура кушак, —
Çут тĕнчере ма пур-ши
Йăрă та чее шăши?
Шăши тус пулмасанах
Тăранăттăм хăймапах.

Кукамайăм, кукамай

Мĕн тери, туссем, аван
Манăн кукамай.
Эп ăна мухтам чунтан
Сăвă çырнă май.

Вăл манпа пĕрле чухне
Пăхнăн сар хĕвел, —
Питĕ ырă чĕрене,
Куç тулли телей.

Вĕрентет куллен мана
Тĕрĕс пурăнма,
Вулама, апатланма,
Сывлăхлă пулма...

Ытарми кукамая
Пĕтĕм кăмăлтан
Пуçăма тая-тая
Тав тăвап паян.

Çумăр умĕн

Килчĕç çитрĕç пĕлĕтсем,
Килчĕç кĕрлесе.
Пĕчĕкçеç хур чĕпписем
Тарчĕç шимплетсе.

Кĕмсĕр-кĕмсĕр тутарса
Илчĕ аслати.
Килне тарчĕ хăраса
Пирĕн кас ачи.

Ал армань пек çаврăнать
Çилĕ таврара.
Хӳлтĕр-хӳлтĕр тутарать —
Ку вăл çумăра.

Çил-тăман

Эп сисмен те, çил-тăман
Тăнă иккен каçхинех.
Никама та каламан,
Чупнă, вĕçнĕ пĕчченех.

Ашкăннă тăк ашкăннă,
Аçтаха пек ахăрнă,
Арçури пек талăрнă,
Ал армань пек çаврăннă.

Ай-йай-йай!
Йăлт тустарнă таврана:
Пӳрт-çурта та армана,
Уй-хире те вăрмана —
Шутламан ăна-кăна.

Вăт пуçтах!
Сиснĕ пулсан, чăн сăмах,
Ашкăнма памастăмах!

Савăнăç

Тӳпе сенкер, таса,
Пат-пат тумла тумлать.
Çуркуннене савса
Чӗрем кăлт-кăлт тапать.

Пукане

Садикран килетӗп
Эпӗ каç енне,
Аллăма илетӗп
Пӗчӗк пукане.
Калаçсан ачашшăн,
Хамăра кура
Вăйă вылямашкăн
Кăмăллă вара.
Кӗнеке вулатпăр
Кăшт канса илсен
Тӗлӗнтермӗш паттăр
Пурнăçӗ çинчен.
Юрăсем юрлатпăр
Иксӗмӗр пӗрле:
Питӗ юрататпăр
Эпӗр пӗр-пӗрне.
Тепӗр чух пит тунсăх
Манăн кăмăла:
Кампа вылӗ тусăм
Эп кайсан шкула?

Ч-42623
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Тигр

Тĕлĕнтермĕш тигр
Тайгара пурнать,
Ак мĕнле вăл, итлĕр,
Юрă янратать:
«Эпĕ тигр, хăрлаккай,
Эп юрлатăп хама май,
Никамран та
хăр-рамастăп,
Хăр-раманшăн
хур-рланмастăп.
Хăр-хăр-хăр!!!
Тăр-тăр-тăр!
Чĕтресе тăрать тавра.
Чыс тусамăр тигра,
Харсăр чунлă паттăра».
Тигр юрлать хăрлатса,
Хăрлатмасть вăл хăраса.

Пăрушка

Велосипедпа каçчен
Ярăнаймăп эп пĕччен.
Эппин, килелле каяс,
Лайăх кĕнеке вулас.

Пăрушкам кĕнекене
Килĕштернĕ пулинех —
Хам пăхам-и чи малтан
Тенĕн тинкерет куçран.

Автан саламĕ

Ку-ку-ру-кук! авăтам-и
Ик çуната шарт çапса,
Çĕнĕ çул юрри пуçлам-и,
Ачасем, сире савса.
Кăмăлăм питех те савăк,
Хĕпĕртетĕп эп чунтан,
Ма тесессĕн çĕн çулталăк
Пуçланать-çке паянтан.
Ку-ку-ру-кук, ки-ки-рик,
Ки-ки-рик, ку-ку-ру-кук!
Кивĕ çул аван иртнишĕн
Чĕререн савăнмалла,
Çĕн çулталăкра пурин те

Питĕ харсăр пулмалла.
Кам ман пек ялан тăрасшăн
Хĕвелтен те иртерех,
Тӳпене кам ăнтăласшăн
Çӳлерех те çӳлерех —
Çав ачасене татах та
Саламлатăп ăшшăнрах,
Вĕсене эп юрататăп
Пуринчен те ытларах.
Çĕнĕ çулăм, Çĕнĕ çулăм!
Эс телей кӳрсем пире,
Йăлкăштăр ялан йăл кулă
Сăн-питре, чун-чĕрере.
Ик çуната шарт çапам-ха
Харсăррăн, пур кăмăлтан,
Авăтам-ха, савăнам-ха
Çĕн çул çитнĕ ятпалан.
Ку-ку-ру-кук, ки-ки-рик,
Ки-ки-рик, ку-ку-ру-кук!

Çĕн телей, килех!

Çитрĕ Хĕл Мучи кулса,
Шур сухалне каçăртса.
Юр пике пĕрлех пырать,
Çепĕç юрă шăратать.

Хĕпĕртерĕç ачасем —
Сар хĕвелĕн шевлисем,
Тăчĕç ёлка тавралла
Тытăнса алран алла.

Чăрăш йăлтăр çуталать,
Илĕртӳллĕн курăнать,
Пуçланать Çĕн çул кĕçех,
Çĕн телей, килех, килех!

Куян юрри

Йытăран та, çĕленрен те
Хăрамастăп нихăçан.
Çулăхчăр кăна — вĕрентĕп,
Ĕмĕр асăнĕç кайран.

Кирлĕ тĕк тытса силлетĕп
Эпĕ ашкăнчăк тилле те.
Кашкăра пĕрре пăхсах
Чĕтреттерĕп туххăмрах.

Упана? Сăмах та çук,
Уттăр пăрăнса тӳрех.
Тигр-и? Вăй виçнĕ чух
Маххă памăп пурпĕрех.

Хĕл Мучи çеç хăратать,
Тăм илтерме пултарать.

Кашкăр сăмахĕ

Эпĕ — Кашкăр-кашаман, кашаман,
Çут тĕнче тăр-тăр чĕтрет эп пуртан.
Эп пуртан кашлать вăрман каш та каш!
Эп пуртан хашкать куян хаш та хаш!
Килĕнчен тухмасть этем эп пуртан,
Йăвинчех выртать Кампур эп пуртан.
Акă эпĕ мĕнлескер, маттурскер,
Хăратма та улама ăстаскер.
Кам танлашĕ-ши манпа, паттăрпа,
Ăш хыптармăш чĕр чунпа, Кашкăрпа?
Мулкачран çеç шикленеп тепĕр чух,
Телевизорта кулать питĕ шух.
Мăшкăллать-çке юриех кунсерен,
Сарчĕ чап вăл тĕнчипех ман çинчен.
Тарăхмастăп пурпĕрех эп ăна,
Сумлă ятшăн тавтапуç Куяна.

Буратино

Кам пĕлмест: эп — Буратино!
Калăр: эп чĕр чун-и, çын-и?
Пĕлмесен те — ним те мар,
Туслă çеç ялан пулар.
Эп — асамлă пултаруçă,
Аллăмра ман ылтăн уçă.
Кăшт кăна ăна пăрар —
Кермен алăкне уçар.
Юмахри пек тĕнчере
Валеçем телей сире.
Чи-чи çутă телейне
Кам илесшĕн — ал çĕклетĕр,
Ташласа вăл тĕлĕнтертĕр,
Савăнса юрлатăр уççăн —
Çавна çеç чыс кӳрĕ уçă.
Кам кĕресшĕн чи малтан,
Ыр сунатăп кăмăлтан.

Парнесем

Хĕл Мучиçĕм, Хĕл Мучи,
Сивĕ, шартлама хуçи,
Мăшăр лаша кӳлчĕ те,
Çуни çине ларчĕ те
Пĕр илемлĕ ирхине
Çитрĕ вăл Чăваш Ене.
Тем те пĕр хăй туяннă —
Чăннипех те пуян-мĕн,
Парнесем пире сĕнет:

«Кăмăл тăвăр, илĕр, — тет. —
Пĕтĕмпех сире валли —
Каннă чух вылямалли
Илĕртӳллĕ теттесем,
Урокра ăс пухмалли
Тĕрлĕ-тĕрлĕ вăйăсем.
Савăнсамăр, ачасем,
Манăн пĕчĕк тусăмсем!»
Хĕл Мучие мĕн калас?
Парнесем илме хавас.
Çĕнĕ çул уявĕнче
Симĕс чăрăш умĕнче
Тав туса ăна чунтан,
Пĕтĕм ырă кăмăлтан
Хĕпĕртĕпĕр, кулăпăр,
Ташлăпăр та юрлăпăр.

Çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевпе

Эх, аван-çке ĕлкăра,
Савăнăç вылять чунра.
Атьăр халĕ, ачасем,
Тантăшсем те тусăмсем,
Юрăсем юрлар, выляр,
Хĕл Мучипеле ташлар.

Çĕн çула çĕн телейпе,
Пысăк ĕмĕт-тĕллевпе
Кĕтсе илер, савăнар,
Пур çынна та ыр сунар.

Чун уççи

Сив Хĕл Мучи пӳрт кантăкĕ çине
Сапса хăварнă пĕтĕм мерченне.
Сăнатăн эс: тем тĕрлĕ çул-сукмак —
Ума тухать тĕлĕнмелле юмах.

Чупаççĕ, вирхĕнеççĕ пăлансем —
Çут кĕмĕл мăйракаллă улăпсем.
Ларать пек шăппăн сак çинче анне,
Тĕрлет илемлĕ, капăр тĕррине.

Мĕн чул асамлăх, мĕн тери илем
Тупать кунта хăйне валли чĕрем.
Пăхатăн та, чăнах та, чун уççи —
Ĕçре пуласчĕ манăн Хĕл Мучи.

Пӳрнеске

Ятӑм манӑн — Пӳрнеске!
Хама май эп çинçешке.
Тен, пӑртакçӑ çемçешке?
Пурпӗр эп — чи паттӑрри,
Пуринчен те маттурри.

Вӑрттӑн-хӑрттӑн систерем:
Манпа чух сире, туссем,
Пӗр пуçтах та хур тӑваймӗ,
Кӑмӑлӑрсене пӑсаймӗ.
Ӗненетӗр-и мана,
Пӳрнеске утамана?

Шурӑ мамӑк е пыл хурчӗ,
Е саралнӑ шухӑ çулçӑ
Тарӗç хӑраса манран,
Питӗ харсӑр паттӑртан.

Кирлӗ тӗк Хур-сухала та
Ним те мар çӑварлӑхлатӑп.
Акӑ эпӗ мӗнлескер,
Пуринчен те вӑйлӑскер.

Кулакан Микула

Кӑмӑллӑн кула-кула
Кунсерен утать шкула,
Кунсерен утать шкула
Харсӑр пӗчӗк Микула.

Эрне

Тунти кун — телейлĕ кун,
Туссене тĕл пултăмăр.
Ытлари кун — ырă кун,
Ыр çынсене куртăмăр.
Юн кун — юрăллă кун,
Юрă шăрантартăмăр.
Кĕçнерни кун — канлĕ кун,
Кăмăла тултартăмăр.
Эрне кун — эреветлĕ кун,
Эртелпе вылярăмăр.
Шăмат кун — шевлеллĕ кун,
Шӳтлерĕмĕр, култăмăр.
Вырсарни кун — вă-ăйлă кун,
Вăй-хăватлă пултăмăр.

Шкула

Çанталăк тӳлек те капăр —
Хĕвел хăпарать ташласа.
Чĕнет вĕренме сентябрь
Пире ăшшăн ырă сунса.

Сыв пул, ытарми, илĕртӳллĕ,
Хаваслă каникул, сыв пул!
Паян ав каллех хĕпĕртӳллĕн
Уçать алăкне савнă шкул.

Эпир çăвĕпе кĕтнĕ мар-и
Çак чаплă, манми саманта.
Халь акă тинех çупăрларĕ
Пире вăл мĕнпур кăмăлтан.

Кашнин питĕнчех — йăлтăр кулă,
Çиçеççĕ вут-хĕмĕн куçсем.
Аван-и, юратнă шкулăм,
Аван-и, туссем, тантăшсем?!

Янрать шăнкăрав кĕмĕл саслăн,
Ăс-хакăл пухма вăл чĕнет.
Уçатпăр телейлĕн, хавассăн
Асамлă пĕлӳ алăкне.

Вăйăçсем

Тухрĕç урама хурсем,
Кăрккасем, кăвакалсем.
Эс те, тусăмçăм, килсем,
Выльăпăр çĕн вăйăсем.

Пулмăшсем

Пĕчĕкçĕ кăна çăрттан
Ярса тытнă Петĕре.
Шывалла мĕнпур вăйран
Сĕтĕрет те сĕтĕрет.

Ак ку мĕнле тамаша —
Урампа пырать лаша!
Курăр-ха, мĕскер хăтланнă:
Кавĕрле çине утланнă!

Интереслĕ сăвă

Са-са-са — улăхра вĕçет сăпса.
Су-су-су — епле хитре сан сассу.
Си-си-си — чăрăш-хыр чи симĕсси.
Се-се-се — пурăнатăп тĕлĕнсе.

Маттуркка сем

Коля тухрĕ урама,
Кĕвенти çине утланчĕ.
Йăрăс пӳллĕ урхамах
Вырăнтан çил пек хускалчĕ.

Çӳресессĕн вĕçтерсе
Лашине тăпах вăл чарчĕ,
Кӳршисем патне кĕрсе
Хĕлипе чĕнсе кăларчĕ.

Лешĕн — пушăт тилхепе,
Коля хăй лаша халь пулчĕ.
Иртрĕç ферма тĕлĕпе —
Хураçка вĕрсе çеç юлчĕ.

Урхамах çакна курсан,
Тен, кӳренчĕ те пăртакçă.
Пурпĕрех мала пăхса
Юртăпа ярт-ярт чавтарчĕ.

Тăсăлать çул хиреллех,
Унталла вĕсем чуптарчĕç.
Лашипе лавçи пекех,
Йĕтеме ыраш турттарчĕç.

Чăмлакансем

Шурик юратать-çке шушкă,
Петя, Павăл — пӳремеч.
Пирĕн туслă пĕчĕк ушкăн
Чăмламасăр çӳремест.



Эп чунпа пуянрах...

Сăмах хыççăн — сăмах,
Йĕрке хыççăн — йĕрке...
Тыткăнлать чунăма
Ытарми кĕнеке.
Тĕлĕнтермĕш хăват
Упранать-тăр унта:
Вĕрентет, ăс парать
Яланах пурнăçра.
Вăл çутать кашнинче
Куллен ырă хĕлхем:
Илемлентĕр тĕнче,
Лайăхланччăр çынсем.
Сăмах хыççăн — сăмах,
Йĕрке хыççăн — йĕрке,
Эп чунпа пуянрах
Вуласан кĕнеке...

Ашкăнчăк Мĕтри

Тĕлĕнтермĕш эп пĕрре
Куртăм ирхине —
Çутă пайăрки пӳртре
Вăй вылянине.

Пĕр самант лӳппер çынла
Шурĕ вăл хуллен,
Туххăмрах маччаналла
Ыткăнчĕ хитрен.

Ăмăрт кайăк пек çӳлтен
Анчĕ вирхĕнсе,
Иртрĕ алăк патĕнчен
Йăл та ял çиççе.

Темĕскер тĕрĕслесе
Тытăнчĕ кумма,
Мулкач пек сиккелесе
Çитрĕ ман ума.

Йăмăхтарчĕ куçсене,
Пиçрĕм йăлт ăшша,
Мĕн тăвас ку шевлене —
Йăлăхтармăша?

Тытăнтăм хăвалама
Пур вăйран ăна,
Ниепле те çук тытма —
Илетех тăна.

Ак хайхи сĕтел çинчен
Майĕпен анать,

Вăл та ывăннă иккен,
Ёнтĕ ĕç ăнать.

Кушак евĕр йăпшăнса
Пытăм ун патне:
— Хăтăлаймăн эс тарса,
Ашкăнчăк, тинех!

Лекрĕн-и-ха капкăна,
Кулнăшăн манран
Каçармастăп эп сана,
Пĕлнĕ пул, нихçан.

Хăтăлчĕ вăшт çеç тарса
Пайăрка каллех,
Хăварать тăрăхласа
Пӳлĕме кĕрсех.

Пулăшу, эппин, ыйтас
Манăн çынсенчен,
Чĕнтĕрне сирсе пăхас
Çут чӳречерен.

Пăхрăм та эп урамра
Куртăм Мĕтрие,
Йăл та ял ялкăштарать
Хăйĕн тĕкĕрне.

Акă кам иккен мана
Тарăхтаракан.
Шел, чухларăм эп çакна
Çав тери кайран.

«Чăн-чăн маршал»

Пултăм эпĕ аслă вăрманта,
Тĕлĕнсе çӳрерĕм кăмăлтан.
Акă йăрăс пӳллĕ вĕрене
Пачĕ юратса мана парне.

Татрĕ те эрешлĕ çулçине
Хучĕ манăн хулпуççи çине.
Чăн-чăн маршал пек
хама туйса
Тăтăм эпĕ шутсăр савăнса.

Кайăп эп Раççей çарне ӳссен,
Чăнласах та маршал пулăп, тен...

«Космонавт пулатăп»

Мĕн пулнă-ши Кируша,
Харсăр пĕчĕк чăваша?
Сарă хĕвелпе пĕрлех
Тăчĕ паян ир-ирех.

Тăчĕ те çăл шывĕпе
Рехетленсе çăвăнчĕ,
Тĕрĕллĕ ал шăллипе
Хул-çурăмне сăтăрчĕ.

Унтан пĕвне вылятса
Хуçкаланма тытăнчĕ.
Шухă тихалла часах
Вăрманалла ыткăнчĕ.

— Пилĕк çухрăм таранах
Манăн паян чупмалла,
Пĕчĕкрен, ачаранах
Вăйлă, паттăр пулмалла.

Пĕр сехет иртсен ача
Киле çитрĕ хашкаса.
Эпĕ ыйтрăм Кирушран:
— Ма аплах асапланан?

— Андриян асатте пек
Космонавт пуласшăн эп.
Тĕнче уçлăхне вĕçесшĕн,
Çăлтăрсем татса килесшĕн.

Валашка-çунашка

Пĕчĕк шăллăмçăм Мишша
Пиçнĕ йăлт паян ăшша:
Картишĕнче пĕчченех
Çунашка шырать ирех.

Хĕрхенес пуль шăллăма,
Кĕçех пуçлĕ макăрма.
Тупрăм кивĕ валашка:
«Акă сана çунашка!»

Натали йăмăкăм

Эх, йăмăкăм, Натали!
Пĕвĕ — сар хăва хулли,
Куçĕ — çут хĕвел шевли,
Тыткăна илет кулли.

Хаклă хăна

Çывăх тусăм Марине
Килĕшет чунтан мана,
Чĕнтĕм эпĕ ирхине
Хăнана паян ăна.

Мĕнле пулмăн тарават
Хамăн хаклă хăнана.
Канфет-премĕк, шоколад
Маринем валли кăна.

«Çи-ха, тусăм, ан вăтан», —
Хăналатăп кăмăлтан.

Чăвашла

Ак ку мĕнле япала?
Ташлать лаша чăвашла,
Чăвашла вулать автан,
Илтĕнет сасси таçтан.

Чăвашла çырать арлан,
Чăвашлах кашлать юман,
Вĕсенчен юлмасть çерçи,
Тăван ялăн юрăçи.

Улайкка та чăвашла
Вĕренесшĕн пулмалла:
Букварь хунă хăй умне,
Выляткалать чĕлхине.

Тавтапуç, атте-анне

Аттепе анне ёçрен
Таврăнсассăн уй-хиртен
Кайăк евёр çунатлантăм,
Майёпен сăмах пуçартăм.

— Ытарми атте-аннем!
Хаçатсем те журналсем
Вăхăт çитрё çырăнмашкăн,
Чёререн сиртен ыйтасшăн:
Ман валли «Тетте» журнал
Пур-и çырăнма вăй-хал?

— Эх, ачам, ачам, ачам,
Мён пёлсе-ши каласан,
Çук-çке ытлашши укçа,
Курăнмасть укçа куçа, —
Терё хурлăхлăн анне
Палăртса хăй кăмăлне.

Шутласа тăрсан пёр ăстрăм
Аттене ыйтуллăн пăхрăм.
Кёттермерё вăл вăрах,
Сăмахларё çапларах.

— Пёр кун çуран утăпин те
Виç кун чёлём туртмăпин,
Çич кун типё тытăпин те
Çён шлепкеллё пулмăпин,
Ăсăм-тăнăм пур чухне
Татмăп хёрён ёмётне,

Çырăнатпăрах «Тетте», —
Терĕ кăмăллăн атте.

— Тĕрĕс те калан пуль, ашшĕ, —
Килĕшрĕ анне йăвашшăн, —
Шутласассăн питĕ тимлĕ
Çак журнал куллен вăл кирлĕ:
Хуплашки мĕне тăрать,
Ырă туйăм çуратать,
Шӳчĕсем, юмахĕсем...
Интереслĕ-çке вĕсем,
Сăввисем — чăн-чăн асам,
Çырăнас эппин, ачам.

— Тавтапуç, атте-анне,
Манмăп ырă тунине.

Çуркунне юрри

Çеçкеленчĕ акă сарă ама курăк —
Çуркунне пуçламăш, çуркунне палли.
Таврана эп сăнăп, тавраллах эп курăп:
Шутлă вăхăт юлчĕ сивĕсем валли.

Сар чечек çил майăн чӳхенсе черченнĕн
Тĕршĕнет пĕр ватă вĕрене çумне.
Тĕлĕнсе сăнать вăл темĕскер тĕпченĕн
Çак асамлă, аслă, çутă тĕнчене.

Сывă-и, туссемĕр, эп те килтĕм — курăр
Тенĕн сăмахлать-ши сарă хĕвелпе —
Çуркунне янратрĕ çепĕç, хӳхĕм юрă
Чечексен хаваслă кĕвĕ-çеммипе.

Ме-ке-кек

Ме-ке-кек те
ме-ке-кек!
Çак чĕр чун «юрлать».
«Мĕкĕте теп,
Мĕкĕте! —
Тенĕн туйăнать.

— Мĕншĕн яланах витлен? —
Тет ача ăна.
— Мĕкĕте, эс ан çиллен,
Эп шӳтлеп кăна.

Мыскараçă качака

Шур сухаллă, мăйракаллă,
Сăрă куçлă çак чĕр чун
Уткалать-çке каллĕ-маллĕ,
Иртĕхет те тепĕр чух.

Урипе тапсассăн тăр-рăст!
Çилленсе хăйне кура
Çăварна карса ан тăр эс:
Кĕç кăтартĕ мыскара.

Вăл сана пырса сĕкесшĕн
Малалла пĕррех сикет.
Те пăртакçă вăй виçесшĕн,
Те шӳтлесшĕн, кам пĕлет?..

Чĕлхем

Чĕлхемĕре танлаштаратăп аннепе,
Аннесенче тапать чĕлхе чĕри,
Ун çепĕç те асамлă вăйĕпе
Çак çĕр çинче пурнать мĕнпур чĕрри.

Мĕнле телей тăван чĕлхем пурри!
Мĕн ĕмĕрлĕх анне пире пӳрни.
Чĕрем юрри вăл, пурăнăç юрри,
Çут тĕнчене ун пилĕпе курни.

Тăван чĕлхем! Тăван аннем-чĕлхем —
Хĕвел те эс, Çĕр чăмăр çаврăнни,
Кашни çынна вăй паракан хĕлхем,
Хăватлăн, аслăн, чаплăн пурăнни.

Савăнтăр атте-анне

Эп паян шкула каятăп,
Савăнатăп-çке чунтан.
Вулама та, шутлама та
Пултаратăп пит аван.

Кăмăл уçă, кăмăл савăк,
Кăлт та кăлт тапать чĕрем,
Ал сулса юлать ачалăх
Вĕренме ыр суннăçем.

Улайкка, Мăр-мăр, сыв пулăр,
Сывă пулăр, теттесем!
Кӳренсе мана ан юлăр,
Аллăмра — кĕнекесем.

Ак шкула утса кĕретĕп —
Ăс пиллен пĕлӳ çуртне.
Тăрăшса вĕренĕп эпĕ,
Савăнтăр атте-анне.

Каçхине

Калăн, чăн-чăн кĕмĕл —
Шурă юр çăвать.
Çунатланчĕ кăмăл,
Илеме савать.
Тӳперен çут уйăх
Мерченне сапать.
Алтăр çăлтăр туйĕ
Йăл кулса вылять.

Хĕл илемĕ

Ытарми илемлĕх пур
Шартлама хĕл кунĕсен:
Ташласа çăвать пек юр
Çӳллĕ-çӳллĕ тӳперен.

Юрласа çил вĕрнĕ пек
Туйăнать куллен пире,
Çак асамлă илемпе
Киленетпĕр чĕререн.

Тус-юлташсемпе пĕрле
Савăнма епле аван!
Шурă шупăрлă хĕлле,
Тавтапуç сана чунтан.

Туптарусем

* * *

Атăл хĕрринче пурнан
Халăха эп пĕлтеретĕп.
Ил пĕр сас палли унран —
Тутлă çимĕç хатĕрлетĕп.
Тепĕр сас палли манран
Çакă йĕркепех кăлар та —
Шăрпăкпа кăшт çунтарсан
Вăйăм-халăма кăтартăп.
Юлчĕ икĕ сас палли çеç —
Манпала халь лаптăк виç эс.

(Тӳпар, ӳпар, пар, ар.)

* * *

Çывăрать вăл кăнтăрла
Пĕр-пĕччен, тарла-тарла.
Каç пулсассăн вăранать,
Унăн-кунăн вăрăнать.
Çак çунатлă кушакран
Шăшие кун çук нихçан.

(Тăмăна.)

* * *

Кунĕпе те çĕрĕпе
Пир тĕртет хăй майĕпе.
Таврари шăнасене
Чаплă таварне сĕнет.

(Эрешен.)

* * *

Эпё питё тарават:
Выльăх-чёрлёхе апат
Çитеретёп тăрăшса.
Ил манран эс кăларса
Шăп та лăп пёр сас палли —
Пулăп лашасем валли
Шăн пăртан сыхланмалли.
Тепёр сас палли илсен —
Ӳсёç ман мăйракасем.

(Такана, макан, мака.)

* * *

Ман ăшăмра кунён-çёрён
Йăсăрланать тётём-сёрём,
Сас палли улăштарсан
Хёр ача ятне вулан.

(Мăрье, Марье.)

* * *

Йышлă манăн ачасем,
Техёмлё пан улмисем,
Мана пăхать сад хуçи,
Эпё — капăр у.....и.

* * *

Вёçсёр-хёрсёр тӳпере
Эп çӳретёп ярăнса.
Пăх-ха, тусăм, эс пёрре
Мана тимлён сăнаса.
Кёвентеллё сарă хёр,

Шур чечек пек чиперскер,
Пурӑнмасть-ши ман патра?
Куртӑн тӑк — систер вара.

(Уйӑх.)

* * *

Эпӗ çӳллӗ çав тери,
Çӗлӗк ӳкетех пӑхсассӑн,
Юптарам-ха кӑшт юри:
«Р» ман хыçӑма лартсассӑн —
Чӗр чуна эп пӗлтеретӗп,
«А» тата унта хушсассӑн —
Çӳç-пуçа кӗç тирпейлетӗп,
«Т» пулсан ялан манпа —
Эп тӑванлӑ йывӑçпа.

(Ту, тур, тура, турам.)

* * *

Эп шап-шурӑ — юр пекех,
Кирлӗ эпӗ кашнинех,
Çавӑнпах-тӑр нихӑçан
Тус-юлташсӑр аптраман...
Алла ручка тытсанах
Асилетӗр яланах.

(Хуш.)

* * *

Пит туслӑ çак вӑрманçӑ ӑвӑспа,
Унпа шыва пӳлет вӑл хаваспах.
Апат та хатӗрлет маттур, ав кур —
Кам тавçӑрӗ: мӗнле чӗр чун-ши ку?

(Хӑнтӑр.)

Тупмалли

Король 3
Кушак генерал . . . . —
Шывё сивё. 4
Хура хур . . . . . —
Инкек . . . . . —
Арпус . . . . . —
Груша . . . . . —
Çумăр 5
Тăлăх чёпёсем 6
Тёлёнекен çерçи . . . —
Савăнăçлă тёлпулу 7
Юрататăп, аннеçём,
сана 8
Мёнле аван вăл пурри 9
Тата тăххăр пур . . . —
Пёр кунхине урамра 10
Çурхи кăмăл 11
Çывăр, уйăх 12
Асанне е кукамай? . 13
Кёр кунё . . . . . —
Кушакпа шăши . . . 14
Кукамайăм, кукамай —
Çумăр умён 15
Çил-тăман 16
Савăнăç 17
Пукане . . . . . —
Тигр 18
Пăрушка . . . . . —
Автан саламё 19
Çён телей, килех! . . 20
Куян юрри 21
Кашкăр сăмахё 22
Буратино 23
Парнесем . . . . . —
Çёнё ёмёт-тёллевпе . 24
Чун уççи 25
Пӳрнеске 26
Кулакан Микула . . —
Эрне 27
Шкула 28
Вăйăçсем . . . . . —
Пулмăшсем 29
Интереслё сăвă . . . . —
Маттурккасем 30
Чăмлакансем . . . . . —
Эп чунпа пуянрах... 31
Ашкăнчăк Мётри . . 32
«Чăн-чăн маршал» 34
«Космонавт пулатăп» 35
Валашка-çунашка . . 36
Натали йăмăкăм . . . —
Хаклă хăна . . . . . —
Чăвашла 37
Татапуç, атте-анне . . 38
Çуркунне юрри . . . 39
Ме-ке-кек 40
Мыскараçă качака . . —
Чёлхем 41
Савăнтăр атте-анне 42
Каçхине . . . . . —
Хёл илемё 43
Туптарусем 44

Литературно-художественное издание

Для детей младшего школьного возраста

Петёр Çăлкуç
(Кузьмин Петр Николаевич)

САВĂНĂÇЛĂ ТЁЛПУЛУ
РАДОСТНАЯ ВСТРЕЧА

Стихи

На чувашском языке

Редактор *Г.А. Антонова*
Художник *Н.А. Васильева*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.П. Печникова*
Компьютерная верстка *Е.В. Ивановой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 20.07.09. Формат 70x100 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,87. Уч.-изд. л. 2,19. Тираж 2000 экз. Заказ № 787. Изд. № 54.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство» Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография №1», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

60.80

Чăваш кĕнеке издательстви